# ПЫСĂК ТЕННИСА ÇУЛ...

**Спорт сывлăха упрама пулăшать тата туслăха аталантарать. Çак чăнлăхпа ниепле тупăшма май çук.**

Раштавăн 15 – 16-мĕшĕнче Çатракасси вăтам шкулĕнче Муркаш районĕнчи шкулсем хушшинче сĕтел çи теннис ăмăртăвĕ иртрĕ. Çак асăннă ăмăртăва 15-мĕш хут йĕркелеççĕ. Маттурсем вĕсем.

Раштавăн 15-мĕшĕнче пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан шкулсенче вĕренекенсем ăмăртрĕç. 10 команда хушшинче 1-мĕш вырăна Панклей шкулĕ, 2-мĕшпе 3-мĕш вырăнсене Кашмашпа Сосновка шкулĕсем çĕнсе илнĕ.

Раштавăн 16-мĕшĕнче вăтам шкулсем вăй виçрĕç. 13 команда хушшинче Çатракасси шкулĕ çĕнтерӳçе тухрĕ, 2-мĕш вырăна – Калайкасси шкулĕ, 3-мĕш вырăнта Муркашсем пулчĕç.

Уйрăм ăмăртура хĕрсем хушшинче Калайкассинче вĕренекен Валя Калинина 1-мĕш вырăн çĕнсе илчĕ, 2-мĕш вырăнта Мăн Сĕнтĕрти Оля Шишокина, 3-мĕш вырăнта Муркаш шкулĕнче вĕренекен Олеся Охотникова. Арçын ачасем хушшинче пĕрремĕш вырăна Çатракасси шкулĕнче вĕренекен Толя Шапошников тухрĕ, 2-мĕш вырăна – Йӳçкассинчи шкул ачи Алексей Ермолаев, 3-мĕш вырăнта Калайкасси шкул ачи Валера Ванюшкин.

**Хам инф.**

# ИНÇЕТРИ ĂМĂРТУСЕМ

**Нумаях пулмасть /чӳк уйăхĕн 11-мĕшĕнчен пуçласа раштавăн 13-мĕшĕччен/ Калайкассинчи 10 С класра вĕренекен Смирнов Алексейпа Степанов Костя Новоуральск хулинчи ăмăртăва кайса килчĕç. Эпĕ Костя Степановран ăмăрту çинчен ыйтса пăхас терĕм.**



Виталий Моисеев тренер ачасемпе питĕ кăмăллă

**— Костя, сана Урал тăрăхĕ мĕнпе тĕлĕнтерчĕ?**

— Паллах, тусемпе. Вĕсем аякранах курăнса лараççĕ. Тĕлĕнмелле илемлĕ!

**— Унти çут çанталăк кунтипе танлаштарсан мĕнлерех?**

— Унта урăх çут çанталăк. Ижевск патне кайнă чух мана хырсем тыткăна илчĕç. Вĕсем çӳллĕ те яштака. Урал патĕнчи хурăнсем пирĕнни пек мар — лутрарах тата кукăртарах. Курмалли, тĕлĕнмелли пайтах пулчĕ.

**— Эсир уйăх хушши тăван килтен, юлташсенчен аякра пурăнтăр. Сире кичем пулмарĕ-и?**

— Тăван йăваран вăхăтлăха уйрăлсан та, куна тем пек интереслĕ irttersen те, çав-çавах тунсăхлă.

**— Сире мĕн тĕлĕнтерчĕ?**

— Мунча. Треннировкăсем хыççăн ун пек паха япала урăх çук.

**— Асра юлнă самант?**

— Ăмăрту вăхăчĕ. Ун чух эсĕ çĕр çинче мĕн пуррине те манатăн. Пĕртен пĕр тĕллев — пĕтĕм вăя хурса пĕрремĕш тухма тăрăшмалла.

**— Мĕн кăмăла хуçрĕ?**

— Пĕр эрне хушши 28°-30°С сивĕ тăни. Хăнăхманран тула тухас килместчĕ.

**— Сирĕн çитĕнӳсем?**

— Кайса килни, паллах, пирĕншĕн пысăк çитĕнӳ. Эпир хамăр лартнă тĕллевсем патне çирĕппĕн утатпăр. Халлĕхе çитĕнӳсем пирки калас килмест. Вăхăт кăтартĕ.

**Оля АКСЯНДАРОВА 10С кл., Калайкасси шкулĕ**

# ЫРКĂМĂЛЛĂХ ТĔНЧЕНЕ ÇĂЛАТЬ

**Раштавăн 1-мĕшĕнчен пуçласа 18-мĕшĕччен А.Г. Николаев ячĕллĕ Калайкасси вăтам шкулĕнче «Шоколадран тунă çурт» ыркăмăллăх акцийĕ иртрĕ.**

Ăна йĕркелекенĕ — «Местное радио». 1-11-мĕш классенче вĕренекенсем кашниех шкула пĕрер шоколад илсе килчĕç. Пылак çимĕçсене Куславккари тата Çĕмĕрлери тăлăх ачасен интернатне леççе парĕç. Ку мероприятие ачасем активлă хутшăнчĕç. Уйрăмах пуçламăш классенче вĕренекенсене палăртмалла. Вĕрентекенсем те асăннă акцирен аякра тăмарĕç, вĕсем те пĕрер шоколад илсе килсе пачĕç. Çамрăк волонтерсем пурĕ 140 яхăн шоколад пуçтарчĕç. Пысăк ĕç туса irttернĕшĕн шкула «Местное радиоран» тав çырăвĕ çитрĕ.

Çак кунсенчех шкулта тата тепĕр ыркăмăллăх акцийĕ пырать. Ăна шкулти ашшĕ-амăшĕсен канашĕ пуçарнă. Мероприятин ячĕ – «Çĕнĕ çул теттине шкула парнеле». Раштавăн 22-мĕшĕ тĕлне 50 яхăн елка тетти пуçтаранă. Акци раштавăн 25-мĕшĕччен пырĕ. Хутшăнма ан манăр!

***Женя ЕВДОКИМОВ* 9 кл.**



Ӳкерчĕк çинче 4-мĕшА класĕнче вĕренекенсем шоколадран çурт тунă самант

# ÇАК КУН ИСТОРИРЕ

***Кăрлачăн 1-мĕшĕ***

Пĕтĕм тĕнчери тăнăçлăх пирки кĕлĕ тăвакансен кунĕ

***1830 çул*** — Раççейре «Литературная газета» тухма пуçлать. Редакторĕ Дельвиг.

***1944 çул*** — Совет Союзĕн гимне пĕрремĕш хут радиопа панă. Унччен гимн вырăнне «Интернационала» /СССР анархисчĕсен юррине гимн вырăнне усă курнă пĕртен-пĕр патшалăх/ юрланă.

***Кăрлачăн 3-мĕшĕ***

1850 çул — Софья Ковалевская çуралнă. Ăсчах, çыравçă, общество деятелĕ. Çĕнĕ Раççей идеисене çĕкленĕ. Ăна хĕрарăм пулнипе Раççей университĕсенче вĕрентме чарнă. Софья Ковалевская Стокгольм университечĕн профессорĕ.

***1891 çул*** — Осип Мандельштам сăвăçă çуралнă.

***1936 çул*** — Çурçĕр Двинари Емец поселокĕнче Николай Рубцов çуралнă. Пирĕн вăхăтăн чи тунсăхлă поэчĕ.

***Кăрлачăн 9-мĕшĕ***

Япун çĕр-шывĕнче ачасем çула çитнин уявĕ

***1905*** — Юнлă вырсарникун

***Кăрлачăн 13-мĕшĕ***

Раççей пичечĕн кунĕ

1832 çул —Иван Шишкин художник çуралнă.

***Кăрлачăн 14-мĕшĕ***

***1911 çул*** — «Дети Арбата» роман авторĕ Анатолий Рыбаков çуралнă

***Кăрлачăн 18-мĕшĕ*** — Нартукан